26-мĕш çул тухать; Хакĕ 20 пус

1943
ОКТЯБРЬ
23
ШАМАТКУН
211(6448) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Вăрман хатĕрлевĕн кĕркуннепе хĕллехи тапхăрĕ

Кĕркуннепе хĕллехи тапхăр вăрман хатĕрлекен организацисемшĕн ответлă вăхăт пулса тăрать. Çав вăхăтра вĕсен фронтпа халăх хуçалăхне пĕтĕм çулталăк хушшинче кирлĕ йывăç материалĕсен ытларахăш пайне хатĕрлесе турттармалла. Çак енчен пăхсан, Йĕпреç вăрманпромхозĕн коллективĕ вăрман хатĕрлев планне срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăрту пуçарса янипаха та вăхăтлă ĕç пулса тăрать. Йĕпреçсем, Октябрь уявне вăрман хатĕрлевĕнче çĕнĕ çитĕнўсем туса кĕтсе илме, çулталăкри плана Конституци кунĕ тĕлне тултарма тата ĕç тухăçлăхне вăрман хатĕрленĕ çĕрте 10 процент, турттарнă çĕрте 20 процент ўстерме пулса, республикăри вăрманпромхозсене ăмăртăва чĕнеççĕ. Çавăнпа пĕрлех вĕсем колхозсене вăрман хатĕрлев планне срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăрту пуçарма сĕнеççĕ.

Пирĕн республикăри кашни вăрманпромхоз, кашни колхоз йĕпреçсем пек ĕçлеме пултарать. Вăрман хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе вăрман организацийĕсен те, çавăн пекех колхозсен те, пысăк ĕç опычĕсем пур. Иртнĕ хĕлле, сăмахран, колхозсем активлăн пулăшнипе, вăрман хатĕрлекен организацисем хăйсен планĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç. Кăçал çуллахи вăхăтра та вăрманпромхозсенчен нумайĕшĕсем хăйсен планĕсене вăхăтра тултарса пычĕç. Çапла, Йĕпреçпе Вăрнар вăрманпромхозĕсем чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли плана ирттерсе тултарнă.

Фронтпа халăх хуçалăхĕ вăрман хатĕрлекен организацисем умне пысăк задачăсем лартать. Çав задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен, чи малтан вăрманта ĕçлеме ĕçпе туртăм вăйĕ кирлĕ таран мобилизацилемелле. Анчах хальхи вăхăтра ку тĕлĕшпе чылай районсем сўрĕк ĕçлеççĕ-ха. Хĕрлĕ Чутай районĕнчен чугун çул валли вутă хатĕрленĕ çĕрте çураннисем 87 çын ĕçлес вырăнне 20 çын, лашапа 56 çын ĕçлес вырăнне 16 çын çеç ĕçлеççĕ. Комсомольски, Элĕк, Сĕнтĕр тата Çĕмĕрле районĕсем те Хĕрлĕ Чутай районĕнчен малтах мар. Кун пек сўрĕклĕхе пĕтермелле.

Вăрманта ĕçлеме çынсемпе туртăм вăйĕ мобилизацилени вăл пĕтĕм ĕçсен пĕр пайĕ кăна пулать-ха. Вăрмана пынă колхозниксемпе колхозницăсем тухăçлăн ĕçлетчĕр тесен, вĕсем валли лайăх условисем туса памалла. Пурăнма ăшă та таса çуртйĕрсем памалла, лашасене усрама сарайсем çителĕклĕ пулмалла. Сутуилў ĕçне лайăх йĕркелеме магазинсем, столовăйсем кирлĕ чухлĕ уçмалла. Клубсемпе хĕрлĕ кĕтессене йĕркеллĕ ĕçлеттермелле. Вăрманта ĕçлекен çын вăхăтра вĕри апат çиме, хаçат-журнал вулама, мунча кĕме пултартăр, ун валли урапа çунасене çийĕнчех юсама, ĕç хатĕрĕсене хăйрама мĕн кирлисем пурте пулччăр. Вăрман касса турттарнă çĕрте кирлĕ инструментсене хатĕрлесси, машинăсемпе механизмсене юсасси çине те тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Вăрман хатĕрлекен организацисем кĕркуннепе хĕллехи тапхăра хатĕрленес тĕлĕшпе ку таранччен чылай ĕçсем тунă. Çапах та вĕсем çителĕксĕр-ха. Пурăнмалли çуртйĕрсене пур çĕрте те юсаса пĕтермен. Кирери механизациленĕ вăрман пунктĕнче çуртсен кантăкĕсене лартман, алăкĕсене юсаман, лашасем тăратмалли сарайсем çителĕклĕ туман тата ытти те. Нумай çĕрте хĕрлĕ кĕтессене япăхтарса янă. Киносем йĕркеллĕ ĕçлемеççĕ. Вăрман хатĕрленĕ тата юхтарнă çĕрте ĕçлекенсен союзĕн обкомĕ çавăн пек йĕркесĕрлĕхсемпе килĕшсе ларать пулас. Вăл вырăнти организацисене тивĕçлипе ертсе пымасть.

Суту-илў ĕçĕнче те йĕркесĕрлĕхсем сахал мар. Леспроторг организацийĕсен ответсăрлăхне пула, Çĕмĕрлери тата Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрманпромхозсенче ĕçлекенсем вăхăтра вĕри апат илеймеççĕ. Хĕл валли пахча-çимĕçсем хатĕрлесси начар пырать. Пахча-çимĕçсем пурĕ 1.200 тонна хатĕрлемелле пулсан, ку таранччен çĕр тоннăна яхăн çеç хатĕрленĕ. Кун пек тĕслĕхсене чылай илсе кăтартма пулать.

Вăрман хатĕрлекен организацисен руководителĕсен, вăрманпромхозсенчи парторганизацисен тата профсоюз комитечĕсен, кĕркуннепе хĕллехи тапхăра мĕнле хатĕрленнине тĕплĕн тишкерсе тухса, мĕнпур çитменлĕхсене çак сывăх кунсенчех пĕтермелле. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче культурăллă-массăллă ĕçе куллен туса пымалла. Вăрманта ĕçлекен çын тĕнчери лару-тăрупа фронтсенчи хыпарсене вăхăтра пĕлсе тăтăр. Вăрман касса турттарнă çĕрте ĕçе большевикла организацилес пулать. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче Йĕпреçсен чĕнĕвне сўтсе-явса, социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пымалла. Кашни вăрманпромхоз, механизациленĕ çул, бригада тата кашни рабочи ăмăртăва хутшăнтăр. Çак ĕçсене тăвас тĕлĕшпе вăрман хатĕрлекен организацисене партипе совет тата комсомол организацийĕсем куллен пулăшса пыма тивĕçлĕ.

Социализмлă ăмăртăва анлăн сарса, кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлев планне уйăхран уйăха ытлашшипех тултарса пырар, фронтпа халăх хуçалăхне йывăç материалĕсем çителĕклĕ парар!

Совет Союзĕн, Пĕрлешўллĕ Штатсен тата Великобритани представителĕсен канашлăвĕнчи совет делегацийĕн составĕ

Мускавра халĕ пыракан Виçĕ держава представителĕсен канашлăвĕнче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн делегацине Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ ертсе пырать.

Делегаци членĕсем çаксем: Маршал К. Е. Ворошилов, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕсем А. Я. Вышинский юлташпа М. М. Литвинов юлташ, Тулашри Суту-илў Халăх Комиссарĕн заместителĕ Б. А. Сергеев юлташ, генерал-майор А. А. Грызлов (Хĕрлĕ Çарăн Генеральнăй Штабĕ) тата Г. Ф. Саксин юлташ (НКИД).

И. В. Сталин юлташ Антони Иден господина йышăнни

Октябрĕн 21-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Великобританин ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Антони Иден господина йышăннă.

Калаçура Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ тата Великобританин ССР Союзĕнчи Посолĕ А. К. Керр господин пулнă.

В. М. Молотов юлташ Америка посолне В. А. Гарриман господина йышăнни

Октябрĕн 21-мĕшĕнче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолне В. А. Гарриман господина йышăннă. Ку йышăну В. А. Гарриман господин СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне хăйĕн верительнăй грамотисене парас тĕлĕшпе пулнă.

Социализмлă Ĕç Геройĕсене И. Т. Тевосян, П. И. Коробов тата В. В. Вахрушев юлташсене Ленин орденĕпе „Серп и Молот" ылттăн медаль пани

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ ĕнер, октябрĕн 21-мĕшĕнче, вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче мĕнпур йышши хĕçпăшал, танксем, авиаци, боеприпассем валли лайăх тата пиçĕ лайăх металл туса кăларас ĕçе организацилес тĕлĕшпе уйрăмах паха ĕçсем тунăшăн награлăланă И. Т. Тевосянпа П. И. Коробов юлташсене тата вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче çĕркăмрăк нумайрах кăларса оборона промышленноçне топливо çителĕклĕ парса тăрас тĕлĕшпе уйрăмах паха ĕçсем тунăшăн награлăланă В. В. Вахрушев юлташа Социализмлă Ĕç Геройĕн званине пани çинчен калакан грамотăпа пĕрле Ленин орденĕ тата «Серп и Молот» ылттăн медаль панă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 21-мĕшĕнчи оперативнăй сводка

Октябрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн çарсем МЕЛИТОПОЛЬ хулинчен çурçĕртерехри тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районсенче вăйлăн çапăçнă, тăшмана тĕреклетнĕ темиçе ялтан хĕссе кăларнă, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Урамсенче хаярлăн çапăçнă хыççăн пирĕн чассем МЕЛИТОПОЛЬ хулин варрине тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă. Тăшман алличе хулан çурçĕр пайĕ кăна тăрса юлнă. Тăшмана çынсем тĕлĕшпе те, техника енчен те питĕ пысăк çухату сем кўнĕ.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 5 километртан пуçласа 10 километр малалла куçнă, Кировоград облаçĕнчи ПЕТРОВО ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата 50 яла ытла йышăнса илнĕ. Вĕсем хушшинче ВЕСЕЛЫЙ РАЗДОЛ, ОВИЯНКА, МИХАЙЛОВКА, АЛЕКСАНДРОВКА, НОВОМАНУЙЛОВКА, ИВАНОВКА, СЕКЛЕТИНОВКА, ЖЕЛТАЯ РЕКА, СОЛДАТСКИЙ, АННОВКА, МАРЬЯНОВКА, ИВАШИНОВКА, ГРУШЕВАТКА ятлă пысăк ялсем пур.

КИЕВРАН çурçĕртерехре пирĕн çарсем ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн вăйлăн çапăçнă.

РЕЧИЦЫ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем ДНЕПР шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн наступлени туса çапăçса пынă, тăшмантан ЧАПЛИН, СТАРОДУБКА, КАЗИМИРОВКА, ИСКРА, НИВА, ВОСХОД ятлă тĕреклетнĕ ялсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче вăйлă разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Октябрĕн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 22 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 80 самолетне персе ўкернĕ.

* * *

Мелитополь хулинчен çурçĕртерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшмана вăйлă тĕреклетнĕ темиçе ялтан хĕссе кăларнă. Мелитополь хулин урамĕсенче хаяррăн çапăçнă. Нимĕçсем кунта фронтăн ытти участокĕсенчен çĕнĕ вăйсем куçарса килнĕ пулин те, пирĕн çарсем паян хулан варринчи пайне пĕтĕмĕшпех тытса илнĕ. Гитлеровецсем хăйсен çухатнă позицийĕсене каялла тытса илме хăтланнисем пурте пăчланса ларнă. Кун каçиччен нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан тасатнă урамсенче нимĕçсен персе çĕмĕрнĕ, çунакан темиçе вунă танкĕ, бронемашинисем, хăй тĕллĕн çўрекен туппиçсем тата ытти çар техники те тăрса юлнă. Паян пирĕн боецсем чугун çул çинче пĕтĕмĕшпех юсавлă 12 танкпа хăй тĕллĕн çўрекен тупăсем тиенĕ платформăсем тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Кременчуг хулинчен кăнтăртарахра тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, Днепр шывĕн сылтăм енче, пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 50 яла ытла тытса илнĕ. Пирĕн танковăй тата стрелковăй чассем, вирлĕн малалла куçса пырса, Кировоград облаçĕнчи Петрово ятлă район центрне тытса илнĕ. Пирĕн çарсем пыра-пыра çапнипе, тăшман пысăк çухатусем тўсет, каялла чакать, хĕçпăшалĕсене тата çар материалĕсен склачĕсене пăраха-пăраха хăварать. Пĕр соединени боецĕсем кун каçиччен нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 26 тунă, 80 пулемет, 60 автомашина тата ытти трофейăсем те нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн танкистсем нимĕç пехотин пĕр полкне аркатса тăкнă та тăшманăн чылай салтакĕсемпе офицерĕсене тыткăна илнĕ. Темиçе артиллери батарейине тытса илнĕ.

Пирĕн авиаци çĕр çинчи чаççене пулăшса пынă, тăшманăн çарĕсене пыра-пыра çапнă. Кун каçиччен сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 52 самолетне персе ўкернĕ.

* * *

Киевран çурçĕртерехре пирĕн çарсем Днепр шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă. Тăшман, совет чаçĕсем малалла куçса пынине чарса лартма хăтланса, темиçе хут та контратака тунă. Пĕр соединени чаçĕсем, нимĕçсем хаяррăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, пĕр яла вăркăнса кĕрсе кайнă та, урамсенче хаяррăн çапăçса, тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пĕр чаçăн боецĕсем тăшман пехотин батальонне çавăрса илнĕ. Çавăрса илнĕ гитлеровецсем, хăраса ўксе, тарма пуçланă, вĕсене вара нумайĕшне пĕтерсе тăкнă. 2 танк, 2 бронемашина, 20 тупă тата 30 миномет тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Речицы хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем Днепр шывĕн сылтăм енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă. Пĕр соединени чаçĕсем артиллери тата авиаци хăватлăн хатĕрлесе панă хыççăн нимĕçсене атакăланă та вĕсен укрепленийĕсене татса кĕнĕ. Ун хыççăн çапăçăва пирĕн танковăй чаççем кĕрсе кайнă. Малалла вирлĕн куçса пырса, пирĕн танкистсем темиçе ял тытса илнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, тăшманăн 3.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, 12 артиллери батарейине тата миномётсен 8 батарейине пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 3 танк, 40 тупă, 110 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. 250 гитлеровеца тыткăна илнĕ.

Пирĕн авиаци тăшманăн çапăçакан речĕсене вăйлăн пыра-пыра çапнă. Нимĕçсен хир тупписемпе зенитнăй тупписене тата пехотăпа çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 100 автомашинине ытла çĕмĕрсе тăкнă е сиенленĕ, пысăк горючи складне сирпĕнтерсе янă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 11 самолетне персе ўкернĕ.

* * *

Пинск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕç пехотин колоннине тапăннă. Çав çапăçура партизансем темиçе вунă гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшман çапăçуран тухма хăтланнă, анчах та ăна партизансен засадăра тăнă тепĕр ушкăнĕ пеме пуçланă. Нимĕçсем хăйсен хĕçпăшалĕсене пăрахса тарнă. Совет патриочĕсем пысăк калибрлă пулемет, винтовкăсем, автоматсем, гранатăсем тата патронсем нумай тытса илнĕ. Партизансен Доватор ячĕпе тăракан отрячĕ, минăсем лартса, çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 2 автомашинăна сирпĕнтерсе янă тата фронталла çарсем турттарса пыракан чугун çул эшелонне ўпĕнтерсе янă. Паровоз тата 8 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Гитлеровецсем нумай вилсе е аманса пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен 304-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 574-мĕш гренадерски полкăн 14-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтаксем Пауль Смичек тата Иосиф Кениг çапла каласа кăтартнă: «Нимĕç командованийĕн пĕлтерĕвĕсенче час-часах: хĕвелтухăçĕнчи çарсем «план тăрăх каялла куçаççĕ», тесе калаççĕ. Çавăн пек юмахсене ухмах кăна ĕненме пултарать. Эпир каялла чакнă чухне хăраса ўкнĕ офицерсем нимĕн тума пĕлмесĕр аптăраса тăчĕç. Пурте калла-малла чупаççĕ, васкаççĕ. Çулсем пурте тулса ларнă. Салтаксен ушкăнĕсем хăйсен подразделенийĕсенчен пăраха-пăрах, кайрĕç. Таркăнсен йышĕ питĕ хытă ўссе кайрĕ. Вара командовани вĕсене тытма ятарласа отрядсем турĕ. Çав отрядсем салтаксене çулсем çинче яра-яра тытатчĕç. Чакнă вăхăтра эпир пысăк çухату тўсрĕмĕр. Пирĕн рота 12 противотанковăй тупăран 10-шне пăрахса хăварчĕ. 574-мĕш полка çĕмĕрсе тăкрĕç. Пĕтĕм полкĕпе те Нейман капитанăн пĕрлештернĕ батальонĕ кăна тăрса юлчĕ, унта та 90 çын кăна. Тĕрĕссипе каласан, пирĕн дивизи каялла чакман, ăна пĕтерсе тăкнă».

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Витебск облаçĕнчи Яновичи ялне пĕтĕмпех ишсе хăварнă. Оккупаци вăхăтĕнче фашистсен карательнăй отрячĕсем тата нимĕç комендатуринчи пуçкасакансем нумай çынна асаплантарса вĕлернĕ, персе пăрахнă тата çака-çака вĕлернĕ. Наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çар Яновичи патне çывхарма пуçласан, ялти комендант Дейман капитан ятарласа «факельщиксен» командине тунă. Вара çав команда ялти мĕнпур çуртсемпе хуралтăсене пĕтерсе тăкнă. Гитлерла ирсĕрсем пурăнмалли 600 çурта ытла çунтарса янă. Ялта пĕр пăсălман çурт та юлман. 3.000 çынтан 250 çын кăна тăрса юлнă.

Пирĕн авиаци Знаменка, Фастов чугун çул тĕввисене тата Никополь станцине тапăнни

Октябрĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Знаменка, Фастов чугун çул тĕввисем çине тата Никополь станцийĕ çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тўрремĕнех пырса тивнипе чугун çул çинче темиçе эшелон çĕмĕрĕлнĕ. Вăйлă пушарсем тухнă. Боеприпассемпе çар техники тиенĕ вагонсемпе платформăсем, горючи тултарнă цистернăсем, çавăн пекех тата тăшманăн çар склачĕсем çуннă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Ўкерчĕк çинче: Канашри «Швейник» артелĕн чи паллă стахановки **А. Софронова юлташ. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, вăл ĕç** нормине тăтăшах 220—230 процент тултарса пырать.

Апат-çимĕç промышленноçĕн районсенчи предприятийĕсенче

Апат-çимĕç промышленноçĕн районсенчи предприятийĕсен коллективĕсем кăçал, Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнчи приказĕнче чĕнсе приказ калани çине ответлесе, 1943 çулхи производство планне срокчен тултарма сăмах пачĕç. Çак обязательствăна пурнăçа кĕртнĕ. Октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне апат-çимĕç промышленноçĕн районсенчи предприятийĕсем çулталăкри плана 100,4 процент тултарнă. Çав предприятисем туса кăларнă продукци хисепĕнче вырăнти чĕр-таварсенчен тунă продукци 80 процент шутланать.

Малта пыракан райпищекомбинатсем çулталăкри плана ирттерсе тултарчĕç. Çапла Кувакинăри райпищекомбинат (директорĕ Жоров), çулталăкри плана 147 процент, Канаш хулинчи пищекомбинат (директорĕ Захватова) 107 процент, Çĕрпўри райпищекомбинат (директорĕ Васильева) 159 процент тултарнă. Мĕнпур пищекомбинатсенчен 10-шĕ хăйсен планне ирттерсе тултарнă.

Сентябрьпе октябрь уйăхĕсенче Çĕмĕрлери, Вăрмарти, Сĕнтĕрвăрринчи, Элĕкри, Хĕрлĕ Чутайри тата Йĕпреçри райпищекомбинатсем хăйсен ĕçне нумай лайăхлатрĕç. Вĕсем вырăнти чĕртаварсем хатĕрлес тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе начар мар ĕçлеççĕ.

Халĕ районсенчи тата хуласенчи пищекомбинатсен коллективĕсем, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çĕршыва планран ирттерсе ытларах продукци парассишĕн кĕрешеççĕ.

П. КАЛИНКИНА,
Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ.

Шупашкар хулинчи стахановецсен канашлăвĕ

ВКП(б) Шупашкар горкомĕ çак кунсенче хулари предприятисенчи, транспортри тата сыхăну ĕçĕнчи стахановецсен канашлуне ирттерчĕ. Канашлура хулари промышленноçăн 1943-мĕш çулхи тăхăр уйăх хушшинчи ĕçĕсем çинчен ВКП(б) горком секретарĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен заместителĕ Мойсик юлташ доклад туса пачĕ.

Промышленноçăн хулари предприятийĕсем иртнĕ 9 уйăхри производство планне 108 процент тултарнă. Виççĕмĕш кварталта продукци кăларассине, пĕрремĕш кварталтипе танлаштарсан, 11 процент ўстернĕ. Продукци кăларас тĕлĕшпе промысла коопераци предприятийĕсем чылай ўсĕмсем тунă. Вĕсем виççĕмĕш кварталта пĕрремĕш кварталтинчен 25 процент ытларах продукци панă.

Нумай предприятисен коллективĕсем, фронта пулăшас туйăмпа ĕçлесе, ĕç тухăçлăхне ўстерсех пыраççĕ. Çапла пĕр заводра ĕç нормине, вăтамран илсен, пĕрремĕш кварталта 134,6 процент тултарнă пулсан, иккĕмĕш кварталта 139 процент, виççĕмĕш кварталта 140,5 процент тултарнă. Ĕç тухăçлăхĕ Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту пуçланнă май татах та вăйлăнрах ўсрĕ.

Анчах та промышленноçăн хулари предприятийĕсем пурте лайăх ĕçлеççĕ теме çук-ха. Хăшпĕр предприятисем хăйсен производство планне тултармаççĕ. Çапла, «Красный кустарь» артель 9 уйăхри плана 70 процент çеç тултарнă. Водосвет та хăйĕн планне тултармасть-ха. Вырăнти тата промысла коопераци предприятийĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем сахал мар.

Пренире стахановец Лупанов, «Кожупряжь» артелĕн производство заведующийĕ Горбов, табак фабрикинчи парторганизаци секретарĕ Зайченко, стахановецсем Димитриева, Рыжкова тата ытти чылай юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем, предприятисен иртнĕ вăхăтри ĕçĕсене тишкерсе тухса, çитменлĕхсене палăртрĕç тата фронта пулăшассишĕн малашне тимлĕнреххĕн ĕçлеме сăмах пачĕç.

Канашлу хулари предприятисен, транспортпа сыхăну ĕçне лайăхлатма палăртса решени йышăнчĕ.

Канашлу ĕçне ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар горкомĕн секретарĕ Чарыков, ВКП(б) Обком секретарĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен заместителĕ Репкин, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн секретарĕ Романова юлташсем хутшăнчĕç. Канашлура Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ф. Н. Орлов юлташ пулчĕ.

Планран ирттерсе—куллен кирлĕ таварсем

КАЛИНИНО, октябрĕн 19-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекенсем Октябрь уявне çитĕнўсем тунипе кĕтсе илессишĕн тăрăшаççĕ. Коллектив йывăçсем лартас плана 110 процент, вутă хатĕрлесе турттарас плана 150 процент тултарнă. Вăрман хатĕрлевĕнче уйрăмăнах Михайлов, Андреев, Данилов тата Павлова юлташсем тухăçлăн ĕçлеççĕ. Вĕсем нормăна 170-шер процент ытларах тултараççĕ.

Вăрман хуçалăхĕн коллективĕ Октябрь уявĕччен планран ирттерсе 3 пин тенкĕлĕх куллен кирлĕ таварсем, 800 кубометр вутă тата 700 урапа тукăнĕ хатĕрлеме пулнă. Çав обязательствăна халĕ пурнăçа кĕртсе çитереççĕ ĕнтĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕНЕ ВĔÇЛЕМЕЛЛИ ФРОНТОВОЙ УЙĂХЛĂХ

ТЫРПУЛ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА СРОКЧЕН ПУРНĂÇЛАССИШĔН ТАТА СТАЛИН ЮЛТАШ ПАТНЕ ПУРИНЧЕН МАЛТАН РАПОРТ ЯМА ПРАВО ИЛЕССИШĔН РАЙОНСЕМ ХУШШИНЧЕ ПУÇЛАННĂ СОЦИАЛИЗМЛА ĂМĂРТУ ОКТЯБРĔН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Етĕрне	тултарнă
Вăрнар	тултарнă
Сĕнтĕрвăрри	тултарнă
Шупашкар	тултарнă
Калинино	тултарнă
Канаш	96,7
Куславкка	96,6
Вăрмар	96,5
Сĕнтĕр	90,0
Элĕк	88,5
Советски	87,7
Çĕрпÿ	86,2
Шăхасан	84,9
Красноармейски	84,3
Хĕрлĕ Чутай	82,3
Ишлей	80,7
Октябрьски	80,1
Елчĕк	75,2
Йĕпреç	73,9
Тăвай	73,1
Комсомольски	71,9
Первомайски	70,8
Улатăр	70,5
Çĕмĕрле	65,7
Кувакино	53,8
Чкаловски	53,7
Шăмăршă	42,2
Пăрачкав	39,3

Ĕçе Макаров пек йĕркелер

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Типсырмари «Пахарь» колхозра фронтовик Василий Макаров ертсе пыракан бригада пуринчен те малта. Вăл тырăсене ытти бригадăсенчен виçĕ кун маларах пухса кĕртнĕ, кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ. Фронтовой уйăхлăх пуçланнăранпа бригада ялхуçалăх çулĕн пĕтĕм ĕçĕсене ăнăçлăн туса пырать.

Макаров юлташ бригадăри çынсене тĕрĕс вырнаçтарса тухнă. Бригадăра ĕç дисциплини çирĕп. Çавна пула авăн çапнă çĕрте колхозниксем нитĕ хăтарлăн ĕçлерĕç. Бригадăри колхозниксемпе колхозницăсем авăн çапма ирхине 2 сехетре тухса каçхине 12 сехетченех тухăçлăн ĕçлерĕç. Вĕсем лăша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăпа кашни кун 6—7-шер тонна тырă çапаççĕ. Кашни колхозник икĕ виç çыншăн ĕçлет. Бригада октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтерчĕ.

Макаров юлташăн бригади 7 гектар çинчи çĕрулмине кĕске вăхăтра пухса кĕртрĕ. Çĕрулми тухăçлă пулнă,—кашни гектартан 114-шар центнер тухнă. Колхоз халĕ государствăна çĕрулми парса татнă. Вăрлăхлăх уйăрса хунă хыççăн колхозниксене ĕçкунĕ пуçне пĕрер килограмм валеççе пама шутлаççĕ.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Курăннă çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерер

ПЕРВОМАЙСКОЕ, октябрĕн 21-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче государственнăй тĕрĕслÿ пуçланчĕ. Колхозсем выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленсе çитниле çитменнине тĕплĕн пăхса тухаççĕ, çитменлĕхсене кăтартса параççĕ. Тĕрĕслекен комиссисем çак иртнĕ кунсенче Киров ячĕпе тăракан тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсен фермисене тишкерсе тухрĕç. Тĕрĕслÿре ку колхозсем выльăхсене хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленсе çитни курăнчĕ. Киров ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Игнатьев) кăçал çĕнĕрен сысна вити туса лартнă тата пăрусем, пÿтексем хупмалли ăшă витесем тунă. Пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхе тутă усрамаллăх апат-çимĕç хатĕрленĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Васильев) кăçал çĕнĕрен ĕне вити туса лартнă. Вите ĕнесене хĕл каçарма хатĕр. Çавăн пекех тĕрĕслÿре Нăрваш Шăхаль ялсоветĕнчи «Восход» колхоз (председателĕ Волков) хĕле лайăх хатĕрленни курăнчĕ.

Тĕрĕслÿ комиссийĕсем чылай колхозсенче пысăк çитменлĕхсем тупса палăртрĕç. «Красная Чувашия» колхоз правленийĕ хăйĕн лаша витисем хĕле хатĕр тесе лăпланса ларнă. Тĕплĕн пăхса тухни çакна кăтартрĕ: лаша витин урайĕ çĕмĕрĕлсе кайнă. Комисси лаша витин урайне хăмаран тума, çак ĕçе октябрĕн 26-мĕшĕччен туса пĕтерме хушса хăварчĕ. Мичурин ячĕпе тăракан колхозра та ферма хĕле кĕме хатĕр тесе шутланă. Кунта та комисси çитменлĕхсене нумай тупрĕ. Витесене ячĕшĕн кăна юсанă, дезинфекци туман. Комисси виçĕ кун хушшинче пур витесене те ăшăтса çитерме тата дезинфекци тума хушса хăварчĕ.

Государство комиссийĕсем палăртса панă çитменлĕхсене халех пĕтерме тăрăшас пулать.

И. ДОЛГОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Куславкка районĕ государствăна тырă парса татнă

Ĕнер, октябрĕн 22-мĕшĕнче, Вăрнар, Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар тата Калинино районĕсем хыççăн Куславкка районĕ государствăна 1943-мĕш çулшăн тырă парса татнă. Унти колхозсем халĕ çитес çулшăн аванс шучĕпе тырă параççĕ.

Районри колхозсенчен пуринчен малтан

СОВЕТСКОЕ. Фронтовой уйăхлăха активлăн хутшăнса, паянхи куна 19 колхоз авăн çапса пĕтерчĕ. Вăл шута «Первое мая», «Радио», «Красный партизан», «Пробуждение», «Спутник колхозника», «Броневик», «Рекорд», «Восток» тата ытти колхозсем те кĕреççĕ.

Уйхир ĕçĕсене районри колхозсенчен пуринчен малтан «Сеятель» колхоз вĕçлерĕ. Унта авăна звеносемпе улшăнса ĕçлесе, кунĕн çĕрĕн çапнă. Молотилкăсемпе туллин усă курнă. Колхоз государствăна 182 центнер тырă панă. Унсăр пуçне, Хĕрлĕ Çар фондне оборона гектарĕсем çинчи тырра та леçнĕ. Вăрлăх фончĕ хывса çитернĕ. Халĕ вăрлăхлăх тырăсене триерпа сортлаççĕ.

Колхоз çĕрулми кăларса пĕтернĕ. Государствăна çĕрулми тата пахча çимĕçсем памалли плана ирттерсе тултарнă. Кĕрхи çĕртме планне пурнăçа кĕртнĕ. Кантăр акмалли участоксем çине тислĕк кăларнă.

Государствăна çу, çăм, çăмарта парса татнă тата çитес çулшăн та аш-какай парса татнă.

Халĕ колхозра выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленеççĕ. Фермăсенчи çуртсене юсаса шуратнă. Выльăх апачĕсем çителĕклĕ таранах пур. Фермăсем валли выльăх илмелли плана тултарнă. Нумай пулмасть, колхоз ирĕке кăларнă районсене яма 5 сысна пачĕ.

М. СТЕПАНОВА.

Хăйĕн сăмахне пурнăçа кĕртрĕ

ЭЛĔК (Хамăр корр.). Машинно-тракторнăй станцинчи машиновед С. Захаров юлташ, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, авăн çапмалли плана кашни кун 150 процентран кая мар тултарса пыма пулнă. Хăйĕн сăмахне вăл авăн çапма пуçланă кунранпах ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. План тăрăх унăн талăкра 12 тонна çапмалла, вăл «МК-1100» маркăллă молотилкăпа 23—24 тонна таран çапать. Çапла ĕçлерĕ вăл Хурнсур колхозĕнче. Унăн машини талăкра 20 сехетрен кая мар ĕçлерĕ.

Халĕ Захаров юлташ Хирлепри Буденный ячĕпе тăракан колхозра ĕçлет. Кунта та вăл нормăна куллен 150 процентран кая тултармасть. Октябрĕн 16-мĕшĕ тĕлне Захаров юлташ 520 тонна тырă çапса кăларнă. Ку вăл плана 123 процент тултарни пулать.

МТС-ри ытти машиноведсем нормăна тултарса пыраймаççĕ-ха. МТС руководителĕсен малта пыракансен опычĕсене сарса, пурне те тухăçлăн ĕçлеме вĕрентмелле.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе хакламан председатель

ВАРНАР. Кĕрхи çĕртме — çитес çулхи вăйлă тырпул никĕсĕ. Çак ĕçе халĕ, çанталăк уяр тăнă вăхăтра, йĕпе-сапаллă çанталăк пуçланиччен туса хăвармалла. Анчах Хапăсри «Советская деревня» колхоз председателĕ кĕрхи çĕртмене хакламасть.

Халĕ ытти ĕçсенчен пушаннă лашасене пурне те кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕçлеттермелле. Анчах «Советская деревня» колхозра ку ĕç пачах урăхла. Колхоз председателĕ Мишанин октябрĕн 16-мĕшĕнче 5 лашана кĕрхи çĕртме тăвас ĕçрен хăтарса, Кольцовкăна хăй валли утă турттарма кайнă. Тата вăл час-часах ĕçсе ÿсĕрĕлет те лашапа ял тăрăх чуптарса çÿрет. Акă октябрĕн 5-мĕшĕнче колхоз счетовочĕ патĕнче тул çутăличченех ĕçкĕ ĕçрĕç. Унта кÿлсе тăратнă пĕр лаша ирччենех тăчĕ.

Мишанинăн кĕрхи çĕртме тăвасси çинчен ытларах шутламалла. Ĕçсе ÿсĕрĕлсе лашапа ял тăрăх çÿрессине пĕтермелле. Мĕнпур лашасене кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕçлеттермелле.

В. КИРИЛЛОВ.

Единоличниксем кая юлаççĕ

ЭЛĔК. (Хамăр корр.). Государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçласа пырасси колхозсемпе колхозниксемшĕн кăна мар, единоличниксен хуçалăхĕсемшĕн те пĕрремĕш тивĕçлĕх пулса тăрать. Çак районри единоличниксен хуçалăхĕсем чылайĕшĕсем пурнăçласа пымаççĕ. Вĕсем иртнĕ çулта та государство умĕнче парăмлă юлнă.

Октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне район государствăна тырă памалли обязательствăна 88 процент тултарнă, çав вăхăтрах единоличниксен хуçалăхĕсем мĕн пурĕ те 9,4 процент çеç тултарнă. Çав вăхăт тĕлне 15 ялсоветĕнчи единоличниксем тырă пама тытăнман та. Вĕсен шутне Мăн Вылла, Тури Елăш, Ехремкасси, Кивĕ Матьăк ялсовечĕсем кĕреççĕ.

Единоличниксем çăмарта, сĕт-çу тата аш-какай памалли обязательствăсене те япăх пурнăçласа пыраççĕ. Кăçалхи çулшăн аш-какай памалли плана пĕтĕмпе те 32,3 процент çеç тултарнă.

Анчах государство умĕнчи парăмсене пурнăçлас тĕлĕшпе единоличниксен хуçалăхĕсем юлса пыни ялсовет руководителĕсене нимĕн чухлĕ те хускатмасть иккен. Вĕсем, ĕçе лайăхлатас тесе, нимĕнле мера та йышăнмаççĕ.

Писĕп ялсоветĕнчи единоличниксем кăçал государствăна тырă пама октябрĕн 10-мĕшĕнче çеç тытăнчĕç, аш-какай обязательствисене пĕтĕмпе те 13 процент чухлĕ çеç татнă. Кун çинчен ялсовет исполкомĕн председателĕ Васильева юлташ пĕлет, анчах ĕçе васкатас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Ялсоветĕнчи колхозсем те кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕнче чăтма çук юлса пыраççĕ, октябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне 55,2 процент чухлĕ çеç авăн çапнă, государствăна тырă памалли обязательствăна 46,7 процент кăна пурнăçланă.

Октябрĕн малтанхи кунĕсенче пулса иртнĕ коммунистсен районри пухăвĕ, фронтовой уйăхлăхăн хăш пĕр итогĕсене сÿтсе явса, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлас тĕлĕшпе уйрăмах единоличниксен хуçалăхĕсем юлса пынине палăртнăччĕ. Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ, анчах ĕçре улшăну çук-ха.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ АВĂН ÇАПАС ТАТА КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ĔÇСЕМ ОКТЯБРĔН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă	Кĕрхи çĕртме тунă
Вăрнар	100,0	86,5
Етĕрне	100,0	69,6
Йĕпреç	100,0	50,0
Кувакино	100,0	24,1
Шупашкар	99,5	71,3
Хĕрлĕ Чутай	98,4	44,5
Шăмăршă	98,2	57,8
Ишлей	98,1	50,1
Калинино	97,5	71,9
Вăрмар	97,0	61,8
Çĕрпÿ	97,0	50,8
Елчĕк	96,6	64,7
Çĕмĕрле	96,5	43,2
Элĕк	96,1	60,0
Советски	95,9	54,4
Канаш	95,7	48,6
Комсомольски	95,4	61,1
Красноармейски	95,0	54,7
Первомайски	94,2	47,7
Сĕнтĕр	93,9	59,7
Куславкка	93,8	68,1
Шăхасан	93,7	49,6
Чкаловски	93,1	51,5
Октябрьски	92,6	62,8
Пăрачкав	92,5	40,3
Тăвай	92,2	45,5
Сĕнтĕрвăрри	91,8	67,5
Улатăр	89,6	42,6
Шупашкар хули	96,0	89,6
ЧАССР тăрăх:	96,5	55,9
Октябрĕн 15-мĕшне пулнă	89,4	47,1

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр

КАЛИНИНО. Пирĕн «Çĕнĕ пурнăç» колхоз кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата лайăх туса ирттерчĕ. Ĕç вăйĕ колхозра сахалланса юлнине пăхмасăр, эпир пĕтĕм ĕçе вăхăтра туса пыма тăрăшрăмăр. Машинăсемпе кăçал нихăш çулхинчен те тухăçлăрах усă куртăмăр. Сарайĕнче темиçе çул хушши пĕр усăсăр ларнă молотилкăна юсаттартăмăр та çунпа авăн чиперех çапрăмăр. Государствăна тырă сентябрĕн 25-мĕшĕнче парса татрăмăр, мĕнпур тырра фронтовой уйăхлăхăн малтанхи вунă кунĕ хушшинче çапса пĕтертĕмĕр.

Вăльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те ĕçсем малалла кайрĕç. Пирĕн фермăра халĕ пур йышши выльăхсем те планран ытларах. Фронтовой уйăхлăхра ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн тимлĕн тăрăшнипе пĕрлех, выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр. Выльăхсем валли çĕнĕ çуртйĕрсем тăвас тĕлĕшпе çу каçах уйрăм бригада ĕçлерĕ. Вăл бригада кăçал 55 ĕне-пăру усрамалăх çĕнĕ вите туса лартрĕ, ытти витесене тĕплĕн юсарĕ. Фермăра ĕçлекен юлташсем выльăх витисенче йĕркелĕх турĕç, ăшĕсене шуратрĕç, кантăкĕсене çурĕç, пур витесене те дезинфекцилерĕç.

Д. УГИНЕВА,
«Çĕнĕ пурнăç» колхоз председателĕ.

Комсомол 25 çул тултарас умĕн

Хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнче

Шупашкарти хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕ (директорĕ В. Сергеева юлташ) вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш вĕренÿ çулне тимлĕн хатĕрленсе кĕтсе илнĕ.

Шкулти хĕрачасем халĕ Ленинла-Сталинла комсомола 25 çул тултарнă куна кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

— Пирĕн пекех, комсомол ретĕнче пулса, çак шкулта вĕреннĕ ачасем халĕ вăрçă хирĕнче хăйсен пурнăçĕсене шеллемесĕр ылханлă тăшмана çапăçаççĕ. Эпир ăçтан-ха вĕсене манăпăр, тăванла пулăшмăпăр?—теççĕ çамрăк комсомолкăсем. Çак шкултан вĕренсе тухнă Тамара Александрова, Антонина Стешова, Люба Ефимова патриоткăсен ячĕсене кута кашни асăнать. Вĕсем вăрçă пуçлансанах хăйсен ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар ретне тăнă. Тамара Александрова халĕ фронтра кĕçĕн лейтенант, радистка пулса ĕçлет. Ăна хăйĕн ĕçне чыслăн пурнăçласа пынăшăн правительство «За боевые заслуги» тата «За оборону Сталинграда» медальсем парса наградăланă.

Çавăн пекех 10-мĕш класран Хĕрлĕ Çар ретне кайнă Коля Исаев, Борис Федоров тата Шапошников комсомолецсем те тăван çĕршывшăн паттăррăн çапăçнă.

— Тăван çĕршыва юрăхсăр, тăшмана курайми пулма, çĕнĕ çĕнтерÿсем патне кайма вĕрентрĕ мана шкулти комсомол,—тесе çырать икĕ орден илнĕ Николай Стешов шкулти хăйĕн юлташĕсем патне.

Халĕ пур классем те уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăннă. Вĕренекенсем комсомола уяв ячĕпе паракан чи хаклă парне вăл—отлично вĕренни, шкула йĕркеллĕ, пĕр кун сиктермесĕр çÿрени пулать. Класпа класс, отрядпа отряд, звенопа звено тата кашни вĕренекен уйрăммăн ăмăртса вĕренеççĕ. Ăмăртура 2-мĕш «В» класс малта пырать. Унта вĕренекенсем 100 процентĕпех шкула çÿреççĕ. Чылайĕшĕсем пур предметсемпе те отлично вĕренеççĕ.

Дирекци шкулти куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялава иккĕмĕш «В» класа пама кандидата тăратнă.

Шкул коллективĕ ачасене пурне те шкула çÿретессишĕн çине тăрса кĕрешет. Кунта урам комитечĕсемпе ачасен ашшĕ-амăшĕсене пухса калаçусем ирттереççĕ. Учительсем шкула çÿремен ачасем патне килĕсене кайнă. Халĕ ачасем пурте шкула йĕркеллĕ çÿреççĕ.

Шкулти хĕрачасем уяв ячĕпе паха та интереслă парнесем хатĕрлеççĕ. Виççĕмĕш классенче вĕренекенсем тĕрлĕсе тунă салфеткăсемпе пĕчĕк коверсем хатĕрлеççĕ. 3-мĕш «В» класри пионерсен звени комсомол пурнăçĕ çинчен альбом хатĕрлет. 7-мĕш классенче вĕренекенсем Ленинла-Сталинла комсомол ретне кĕме, 3-мĕш классенче вĕренекенсем пионера кĕме хатĕрленеççĕ. 2-мĕш «А», 5-мĕш «Б» классенче вĕренекенсем нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнă Краснодар крайĕнчи пĕр туллимар вăтам шкула учебниксемпе илемлĕ литература кĕнекисем, хут-карандашсем ярса параççĕ.

Уяв кунĕнче пионерсен чаплă сборĕ пулать. Унта вĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартса параççĕ. Уяв ячĕпе выставка уçалать. Унта отличниксен ĕç тетрачĕсем, хитре тĕрĕсем пулаççĕ. Отрядсенче стена хаçачĕсем тухаççĕ.

Хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕ — Хĕрлĕ ялавлă шкул. Çак ялава вĕсем иртнĕ вĕренÿ çулĕнче кăтартуллă ĕçленĕшĕн илнĕ. Хĕрлĕ ялава аларан ярас мар тесе, шкул коллективĕ кăçалхи вĕренÿ çулĕнче тата лайăхрах ĕçлеме тăрăшать.

З. МИТРОФАНОВА.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ЛАРУ-ТАРУ

СТАМБУЛ, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцари хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Италири хресченсем гитлерла оккупантсенчен хăйсен тырпулне пытараççĕ, тытса илесрен хăраса, пасарсене те нимĕн те илсе тухмаççĕ. Оккупациллĕ влаççем хресченсем хирĕç тăнине хаяррăн тыткаланипе пусарма хăтланаççĕ.

Оккупациллĕ çарсен командующийĕ Кессельринг приказ пичетлесе кăларнă. Çав приказра вăл влаççенчен ыйтмасăр тырпул сутакан çынсене судсăрах персе вĕлерессипе хăратать. Комо ятлă хулари халăха, персе вĕлерессипе хăратса, «Германин çар склачĕсенчен вăрланă» тырра тата ытти апат-çимĕçсене каялла тавăрса пама хушнă.

Фашистла хаçатсем нимĕçсене хирĕç тăракан Итали халăхне хăратса çыраççĕ.

РАБАТ, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Италирен илнĕ хыпарсем тăрăх, хĕçпăшалсем тытса юлнă рабочисемпе салтаксем Миланпа Турин хулисен урамĕсенче Германи çарĕсемпе çапăснă.

ЛОНДОН, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, гитлерла оккупациллĕ влаççем Çурçĕр Италире нумай священнике тытса хупнă. Тытса хупнисем хушшинче Миланри архиепископ кардинал Шустер пур. Вĕсене кĕл тунă чухне гитлеровецсем çаратса çÿренине хурланă тесе айăплаççĕ. Оккупациллĕ влаççем пĕлтернĕ тăрăх, арестленисене Германин çар трибуналĕсен аллине параççĕ. Çав трибуналсене арестленисене вĕлермелли е ирĕксĕр ĕçлеттермелли приговорсем йышăнма ирĕк панă.

МУССОЛИНИ ЧАСАХ «ВЫРАНТАН ТУХАТЬ» ТЕКЕН ХЫПАРСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Газетт де Лозанн» ятлă хаçатăн Будапештри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Муссолини «премьер-министр вырăнĕнчен тухма» шутлать, хăй вырăнне Грациани маршала лартасшăн,—тет. Муссолини вăл гитлерла влаççем туса хунă пуканелле «фашистла республика правительствин» «премьер-министрĕ» пулса тăрать.

Хаçат çапла çырать: «Будапештри итальянец фашисчĕсем хушшинче çапла калаççĕ: Муссолини Германие кайнăранпа унтан тухса кайман, унăн ăсĕ-шухăшĕ пăсăлас патне çитнĕ, ăна вăйпа панă «премьер-министр» ĕçне вăл ирĕксĕр кăна туса тăрать», тет хаçат.

Францире итальянецсене хĕсĕрлени

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Ассошиэйтед пресс» агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лаваль полицийĕ Францире пурăнакан итальянецсене арестлет. Арестленисене пурне те Германие ирĕксĕр ĕçлеме яраççĕ. Çак майпа итальянецсен нумай çемьисене илсе кайнă ĕнтĕ.

Францири Итали консульствисен çурчĕсене пурне те нимĕçсем йышăннă.

Кăнтăр-хĕвелтухăç Франциерен темиçе пин итальянец сăртсем хушшине тарнă. Тарса тухнисенчен хăшĕсем, Францие Итали хушшинчи чикĕ урлă каçса, Çурçĕр Италири оккупантсене хирĕç кĕрешекен çарсемпе пĕрлешнĕ. Нумайĕшĕ француз партизанĕсен отрячĕсене кĕнĕ.

Илнĕ хыпарсем тăрăх, Францире пĕр миллион çурă ытла итальянец пурăннă.

ИТАЛЬЯНЕЦ ДОБРОВОЛЕЦĔСЕН КОРПУСĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Италин нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен тарнă Итали салтакĕсемпе офицерĕсем Германие хирĕç кĕрешме хăйсен ирĕкĕпе çыранса корпус йĕркелеççĕ. Ăна Неапольте йĕркелеççĕ. Вăл Италин яланхи çарне кĕмест, союзниксен çарĕн командованийне пăхăнса тăрать.

КĔСКЕН

Франци патриочĕсем нимĕç захватчикĕсене пурнăç памаççĕ. Французсем Германин çар поезчĕсене переççĕ. Нумай пулмасть, пĕр районра Германин çар эшелонĕ çине пулеметсемпе пенĕ. Çавăн чухне нумай гитлеровеца вĕлернĕ тата амантнă. Нимĕçсем хăйсене Франци партизанĕсен пульли лекесрен хăтăлма хăйсен çар поезчĕсен чÿречисем умне Франци хĕрарăмĕсемпе ачисене лартма пуçланă.

* * *

Югославин Венгрия тытса илнĕ çĕрĕсенче патриотсем час-часах захватчиксене хирĕç кĕрешеççĕ. Югослави партизанĕсем тырă склачĕсене пĕтерсе тăкаççĕ, чугун çулсемпе станцисене сирпĕнтере-сирпĕнтере яраççĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Тĕплĕн пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн «Вĕçекен крепость» йышши бомбардировщикĕсем ĕнер Германин паха чугун çул тĕвви тата алюмини шăратакан чи паллă центр пулса тăракан Дюрен хулине вăйлăн пырса тапăннă. Дюрен районне тапăннă чухне бомбардировщиксене истребительсен пысăк ушкăнĕ хÿтĕлесе пынă.

Англи авиацийĕ Çурçĕр Францие Голландие вăйлăн тапăннă.

Октябрĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен чылай пысăк ушкăнĕ Германие тапăннă. Çав бомбардировщиксем Лейпциг хулине пуринчен вăйлăрах атакăланă. «Москито» йышши самолетсем Берлинри тĕрлĕ объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Çак операцисенчен союзниксен 25 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

Октябрĕн 20-мĕшĕ тата 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Германи авиацийĕ Хĕвелтухăç Англие тата Лондон районне темиçе хутчен пырса тапăннă. Пăрахнă бомбăсем темиçе тĕлте сиен тунă тата вилнисем пур.

ИДЕН КАИРТА ПУЛНИ

ЛОНДОН, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Антони Иден Мускава кайнă чухне октябрĕн 13-мĕшĕнче Каир районĕнчи çар чаçĕсене тата сывлăш-çар вăйĕсем вырнаçнă вырăнсене кĕрсе тухнă.

Иден хăй Каирта пулнă вăхăтра Египет королĕпе Фарукпа тата Египет премьер-министрĕпе Нахас-пашапа, çавăн пекех тата Грецие Югослави королĕсемпе тĕл пулнă.

Театр

Чăвашсен Государство Академи театрĕ çĕнĕ сезонра

Театрăн çуллахи гастролĕсем пĕтрĕç. Коллектив халĕ хĕллехи сезона уçма хатĕрленет.

1943-мĕш çул пĕтиччен театр коллективĕсем çĕнĕрен чылай спектакльсем кăтартаççĕ. Чăваш труппи Н. С. Айзман çырнă «Лиза Короткова» ятлă спектакль хатĕрлерĕ. Çак труппа халĕ, пĕр вăхăтрах А. Н. Островскин «Вăрман», тата «Воспитанница» спектакльсем хатĕрлет. Театрăн художествăллă руководителĕ Л. Н. Родионов «Олеко Дундич» пьесăна лартма хатĕрленет. Вăл спектакле чăваш труппи çак çулăн вĕçĕнче кăтартать. Иртнĕ çулсенчи репертуартан труппа «Отелло», «Нарспи», «Чакка» пьесăсене выляса парать.

Вырăс труппин çуллахи гастрольсем вăхăтĕнче сталинла преми лауреачĕн Л. Леоновăн «Нашествие» ятлă пьесине тата А. Н. Островскин «Бесприданница» ятлă драмине хатĕрлерĕ. Труппа Ленинла-Сталинла комсомол XXV çул тултарнă ятпа Арбузовпа Гладков драматургсен «Бессмертный» ятлă пьесине хатĕрлет. Çулталăк вĕçлениччен труппа Н. В. Гоголĕн «Ревизор» комедине кăтартать.

Иртнĕ çулсенчи репертуартан вырăс труппи «Айдар», «Петр Крымов», «Кремлевские куранты», «Не все коту масленица», «Слуга двух господ», «Парень из нашего города» пьесăсене кăтартать.

Театр хĕллехи сезона октябрĕн 24-мĕшĕнче чăваш труппи лартакан «Отелло» спектакльпе уçать. Октябрĕн 25-мĕшĕнче вырăс труппи «Бесприданница» (премьера) кăтартать.

Г. МОРДКОВИЧ.
Чăвашсен Государство Академи театрĕн директорĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

октябрĕн 22-мĕшĕнчен пуçласа кашни кун сасла илемлĕ

САЛАВАТ ЮЛАЕВ

ятлă çĕнĕ фильм кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 18, 20 тата 22 сехетре.

ЧĂВАШДРЕВПРОМСОЮЗА плановик-экономистсем, экономист-финансист, финанс отделĕн начальникĕ, бухгалтерсем, вăрман хатĕрлес ĕçе пĕлекен инженер, йывăç çурас ĕçе пĕлекен инженер, йывăç каскалас ĕçе пĕлекен инженер, пăс вăйĕ хуçалăхне пĕлекен инженер, çавăн пекех тата бухгалтер, плановик, статистик ĕçне вĕренес текен учениксем кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Заводская, 12. 3—2

ЧЕБТОРГА кунăсла тÿме тата пахча-çимĕç типĕтме рабочисем кирлĕ. Ĕç укçи калаçса татăлни тăрăх.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 11. 2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б 53 84 п. л.